28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
МАЙ
15
ЫТЛАРИКУН
92(6843) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Пирӗн хуласемпе район центрӗсем юсавлӑ та илемлӗ пулччӑр!

Совет влаҫӗ ҫулӗсенче пирӗн Тӑван ҫӗршывра вуншар ҫӗнӗ хуласем, ҫӗршер рабочи поселоксем, район центрӗсем ӳссе ларчӗҫ. Вӗсене пирӗн ӗҫҫыннисем, большевиксен партипе совет правительстви ертсе пынипе, вӑя шеллемесӗр, вӑхӑта пӑхмасӑр ӗҫлесе тунӑ. Ҫавӑнпа ӗҫҫыннисем, хӑйсен хулисемпе ялӗсене—пурнӑҫӑн тӑван йӑвисене—чӗререн юратаҫҫӗ, вӗсене тата чаплӑрах та илемлӗрех тума тӑрӑшаҫҫӗ. Совет ҫыннисем хӑйсен тӑван кӗтесӗсене юратни Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче уйрӑмах уҫҫӑн палӑрчӗ. Нимӗҫ захватчикӗсем сахал мар хуласемпе ялсене ҫӗмӗрсе хӑварчӗҫ, ҫунтара-ҫунтара ячӗҫ. Анчах та вӗсем тӗмӗнле вӑрӑ-хурахла хӑтлансан та, пирӗн халӑх пурӑнакан вырӑнсенчен пушхир туса хурасси пулмарӗ. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана хӑваласа пынӑ вӑхӑтрах, вӑрҫӑ иртнӗ вырӑнсенче хуласемпе ялсене ура ҫине тӑратас ӗҫ хӗрӳллӗ пуҫланса кайрӗ. Акӑ, сӑмахран, вӑрҫа пула питех те ҫӗмӗрӗлнӗ паттӑр Сталинград хули хӑвӑртрах юсанса пырать. Халӗ унта чылай ҫуртсене юсаса лартнӑ, темиҫе предприятие ӗҫе янӑ, трактор заводӗ те ӗҫлеме тытӑннӑ ӗнтӗ. Ленинградри рабочисемпе служащисем те хӑйсен хулине ура ҫине тӑратас тӗлӗшпе нумай вӑй хураҫҫӗ. Ирсӗр тӑшман ҫӗмӗрсе хӑварнӑ Совет Союзӗнчи кашни хуларах, кашни ялтах халӗ ҫавӑн пек хӗрӳллӗ ӗҫ пырать.

Пирӗн совет правительстви нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи халӑх хуҫалӑхне ура ҫине тӑратма пур енчен те пулӑшать.

Ҫав вӑхӑтрах пирӗн правительство Тӑван ҫӗршыври ытти хуласене малалла аталантарасси ҫине те тимлӗн пӑхать.

Юлашки ҫулсенче пирӗн Чӑваш республикинчи хуласен сӑн-сӑпачӗ те палӑрмаллах улшӑнчӗ. вӗсем промышленность центрӗсем пулса тӑчӗҫ. Тӗп хулара—Шупашкарта—халӗ темиҫе предприяти ӗҫлет, иртнӗ ҫулсенче кунта ҫӗнӗрен пир-авӑр, чӑлха, табак фабрикисем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Канаш, Улатӑр, Ҫӗмӗрле хулисенче те промышленность хӑвӑрт ӳссе пырать.

Анчах та пирӗн хуласене пысӑклатса пымалла кӑна мар, вӗсене йӗркеллӗ те илемлӗ, чаплӑ та мухтавлӑ тумалла. Кӑҫал Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ май, пирӗн хуласене юсаса йӗркелес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем питех те нумай. Чи малтанах Шупашкара пур енчен те юсаса йӗркелесе чӑваш халӑхӗн тӗп хулине тивӗҫлӗ сӑн-сӑпат кӗртмелле. Шупашкара юсаса йӗркелеме кӑҫал 600.000 тенкӗ, е пӗлтӗрхинчен 1,5 хут ытларах укҫа панӑ. Унсӑр пуҫне, РСФСР Совнаркомӗ Шупашкарта 24 хваттерлӗ ҫурт, ҫӗнӗрен ача сачӗн ҫуртне тума, водопровода тӑсма 1.050.000 тенкӗ уйӑрнӑ.

Хулари партипе совет организацисен, ҫуртйӗр хуҫалӑх руководителӗсен задачи, паллах, ҫак укҫапа пӗтӗмӗшпех усӑ курасси, ӑна чи кирлӗ ҫӗре тӑкакласси пулать. Анчах та хулана юсаса йӗркелес тӗлӗшпе пур ӗҫсене те ҫав укҫапа кӑна туса ҫитерме ҫук, хулана илемлетес ӗҫе ӗҫҫыннисене хӑйсене те хутшӑнтарас пулать. Малта пыракан хуласенче ӗҫҫыннисенчен пример илсе, Шупашкарти чылай предприятисемпе учрежденисен коллективӗсем хулана илемлетес тӗлӗшпе ӗҫлеме килӗшрӗҫ. Ку тӗлӗшпе Якунин юлташ главнӑй инженер пулса тӑракан заводра ӗҫлекенсем лайӑх пуҫару пачӗҫ. Вӗсем, хӑйсен завочӗн территорийӗпе завод таврашӗнчи урамсене культурӑллӑ сӑн-сӑпат кӗртес, илемлетес тӗлӗшпе татӑклӑ обязательствӑсем илсе, ҫак пархатарлӑ ӗҫе ыттисене те хутшӑнма чӗнсе каларӗҫ. Халӗ вӗсем хӑйсен обязательствисене чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Завод картишне ҫӳп-ҫапран тасатнӑ, ҫывӑхри ҫулсене тӳрлетнӗ, магазинсемпе столовӑйсене юсаҫҫӗ тата ытти ӗҫсене те тӑваҫҫӗ.

Тӑван хулана юсаса илемлетес ӗҫе тата Наркомторг, пристань работникӗсем те активлӑн хутшӑннине палӑртмалла. Наркомторгра ӗҫлекенсем кино-театр ҫумӗнчи сквера юсаҫҫӗ, пристань работникӗсем Атӑл хӗррине илемлетеҫҫӗ.

Анчах та, Шупашкара юсаса йӗркелемелли плана, хулари партипе совет тата профсоюз активӗн пухӑвӗнче ҫирӗплетнӗскере, кашни предприятипе учрежденинех ҫитерсе пулин те, хулари чылай предприятисемпе учрежденисен коллективӗсем ҫак ӗҫе халиччен те хутшӑнман.

Пирӗн Шупашкар хули тӑванла Мари республикин столицине Йошкар-Олапа ӑмӑртӑва тухнӑ. Нумаях та пулмасть ӑмӑртӑвӑн малтанхи итогӗсене пӑхса тухрӗҫ. Ун чухне Шупашкар ӗҫҫыннисем хӑшпӗр енӗпе Йошкар-Ола ӗҫҫыннийӗсенчен начар ӗҫлени курӑнчӗ. Халӗ ӗнтӗ ӑмӑрту итогӗсене тунӑ чух палӑртнӑ ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме тӑрӑшас пулать. Йошкар-Ола хулипе пыракан социализмлӑ ӑмӑртура пирӗн пур енӗпе те мала тухмалла.

Республика юбилейне тивӗҫлипе кӗтсе илес тетпӗр пулсан, паллах, пӗр Шупашкара кӑна мар, республикӑри пур хуласемпе рабочи поселоксене те, пур район центрӗсене те уяв сӑнӗ кӗртмелле. Пирӗн республикӑри чылай хула совечӗсем хӑйсен хулисене ҫителӗксӗр пӑхса тӑраҫҫӗ, хулана юсаса йӗркелес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫӗмӗрле—ҫӗнӗ хула. Унӑн сӑн-сӑпачӗ те ҫӗнӗ, культурӑллӑ пулмалла. Анчах Ҫӗмӗрлере вара ҫакна курма ҫук-ха. Кунти коммунальнӑй мунча хӗлӗпех йӗркеллӗ ӗҫлемен, хула больници йӑтӑнса анас пек ларать, хулана пымалли ҫулсем ишӗлсе пӗтнӗ, тротуарсем ҫӗрсе кайнӑ, магазинсемпе ларексен кантӑкӗсем ванса пӗтнӗ, стадионсен картисене ватса пӗтернӗ, садсемпе скверсене хупнӑ, парксене лартнӑ йывӑҫсене выльӑхсем ҫисе янӑ, рабочисем пурӑнакан ҫуртсем тавралӑшӗнче тасамарлӑх купаланса выртать. т. ыт. те. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Ҫӗмӗрлери партипе совет органӗсем, хуҫалӑх руководителӗсем хӑйсен хули ҫине чунсӑррӑн пӑхнинчен, йӗркесӗрлӗхсене хӑнӑхса ҫитнинчен килет. Улатӑр, Ҫӗрпӳ, Етӗрне, Канаш, Сӗнтӗрвӑрри хулисенче те йӗркелӗхпе тасалӑх ҫук-ха. Канаш хула совечӗн пурӑнмалли чылай ҫуртйӗрсене, культура учрежденийӗсене, тротуарсене тӗпренех юсамалла.

Рабочи поселоксемпе район центрӗсене йӗркелес, ҫулсене юсаса симӗслетес тӗлӗшпе халӗ Муркашра ҫеҫ ӗҫсем кӑштах анӑҫлӑ пыраҫҫӗ. Кунта республика 25 ҫул тултарнӑ тӗле ҫӗнӗ ҫуртсем, сад туса лартаҫҫӗ. Муркаша культурӑллӑ райцентр тӑвас ӗҫе районри рабочисемпе служащисем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, майӑн 5-мӗшӗпе июнӗн 5-мӗшӗ хушшинче хуласемпе ялсене тата ҫулйӗрсене йывӑҫ лартса симӗслетмелли уйӑхлӑх пырать. Выранти партипе совет органӗсен ҫак уйӑхлӑха ӗҫҫыннисене ытларах хутшӑнтармалла.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарасси уйӑх ытларах ҫеҫ юлчӗ. Республикӑри ӗҫҫыннисем ҫак куна тивӗҫлипе кӗтсе илес тесе, социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Йывӑр вӑрҫӑ чарӑннӑшӑн хавасланса рабочисемпе колхозниксем тата служащисем ҫӗнӗ ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ, республика юбилейне ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗн уявне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе пӗрлех хамӑр хуласемпе район центрӗсене юсаса йӗркеленипе кӗтсе илер, аслӑ уява тинтерлӗ те илемлӗ хуласемпе ялсенче ирттерер!

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 13-мӗшӗнче ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем парӑннӑ нимӗҫ ҫарӗсен Курляндири ушкӑнӗн соединенийӗсемпе чаҫӗсене йышӑнса пынӑ. Майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче 181.032 салтакпа унтер-офицер, 8.038 офицер тата 42 генерал тыткӑна парӑннӑ. Тыткӑна илнӗ генералсем хушшинче, халиччен пӗлтернисемсӗр пуҫне, ҫаксем пур: Курляндири ушкӑнри инженери ҫарӗсен начальникӗ МЕДЕМ генерал-лейтенант, нимӗҫ ҫарӗсен Курляндири ушкӑнӗн ҫыхӑну начальникӗ НЕГЕНДАНГ генерал-майор, 16-мӗш арми штабӗн начальникӗ ГЕРСДОРФ генерал-майор, 18-мӗш арми штабӗн начальникӗ МЕРК генерал-майор, 16-мӗш армири артиллери начальникӗ БАУЭРМАЙС генерал-майор, 18-мӗш армири артиллери штабӗн начальникӗ ФИШЕР генерал-лейтенант, Курляндири ҫирӗплетнӗ район коменданчӗ ВАН-ГИНКЕЛЬ генерал-лейтенант, ЛИБАВА хулин ҫыранри оборонин начальникӗ ЭРНЕВАЛЬД адмирал, 1-мӗш сывлӑш флотӗн командирӗ ГЛЮБАЙ генерал-лейтенант, ҫыранри оборона коменданчӗ ВЕРТЕР генерал-майор, САБИЛЕ хули патӗнчи ҫирӗплетнӗ район коменданчӗ РУПРЕХТ генерал-майор, 1-мӗш сывлӑш флотӗн ҫыхӑну начальникӗ ЗАФФЛЕР генерал-лейтенант, 16-мӗш армин главнӑй ветеринарӗ — ветеринари службин генералӗ БЕТКЕ тата ПАВЕЛЬ генерал-майор пур. Ҫав вӑхӑт хушшинчех ҫак трофейсене йышӑнса шута илнӗ: самолетсем—136, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—325, хир тупписем—1.548, минометсем—567, пулеметсем—4.363, винтовкӑсемпе автоматсем—57.646, автомашинӑсем—5.825, тракторсемпе тягачсем—240, бронетранспортерсем—224, радиостанцисем—310, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—3.442, лашасем—16.543.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ВИСЛА вӑрри районӗнче, ДАНЦИГРАН хӗвелтухӑҫнерехре, ПУТЦИГЕ-НЕРУНГ сӑмса хӗвче, ГДЫНЯ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, тата БОРНХОЛЬМ утравӗ ҫинче парӑннӑ нимӗҫ ҫарӗсене йышӑнассине пӗтерсе пынӑ. Майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче 74.939 нимӗҫ салтакӗпе офицерӗ тата 12 генерал тыткӑна парӑннӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех ҫак трофейсене йышӑнса шута илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—10, хир тупписем—498, минометсем—46, пулеметсем—3.400, винтовкӑсемпе автоматсем—28.000, бронетранспортерсем—13, автомашинӑсем—2.000, радиостанцисем—218, лашасем—1.500, катерсемпе баржӑсем—23.

Чехословакипе Австрире УКРАИНӐРИ 1-мӗш, 4-мӗш, 2-мӗш тата 3-мӗш фронтсен ҫарӗсем хӑйсем йышӑннӑ районсене ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал тата ВЕЛЕР генерал-полковник ертсе пыракан ҫарсен сапаланса пӗтнӗ отрячӗсенчен тасатса пынӑ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, тӗплӗрех палӑртнӑ тӑрӑх, майӑн 9-мӗшӗпе 12-мӗшӗ хушшинче пӗр йӗркесӗр парӑннӑ 213.355 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тата 14 генерала тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнӗ генералсем хушшинче, унччен пӗлтернисемсӗр пуҫне, тата ҫаксем пур: 40-мӗш танковӑй корпусӑн командирӗ—танковӑй ҫарсен генералӗ ХЕНРИЦИ, учебнӑй корпусӑн командирӗ—артиллери генералӗ МОЗЕР, 59-мӗш армейски корпусӑн командирӗ ЗИЛЕР генерал-лейтенант, 17-мӗш армин тылӗн коменданчӗ ГЕШЕН генерал-лейтенант, резерври 193-мӗш дивизин командирӗ Эргарт фон ГЕЙЗО генерал-майор, 304-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ АРНИНГ генерал-майор, 371-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ ШЕРНСБЕРГ генерал-майор пур. Ҫав вӑхӑт хушшинчех фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—780, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—649, хир тупписем—3.100, минометсем—1.400, пулеметсем—6.700, бронетранспортерсем—480, винтовкӑсемпе автоматсем—120.000, автомашинӑсем—30.000 ытла, тракторсемпе тягачсем—954.

УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче пӗр йӗркесӗр парӑннӑ 71.738 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ тата ҫак трофейсене тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—127, хир тупписем—900, минометсем—510, пулеметсем — 1.700, винтовкӑсемпе автоматсем — 15.300, автомашинӑсем — 1.480, радиостанцисем—100, лашасем—2.000, ҫар пурлӑхӗ тиенӗ лавсем—5.000.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче пӗр йӗркесӗр парӑннӑ 369.459 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тата 16 генерала тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнӗ генералсем хушшинче, халиччен пӗлтернисемсӗр пуҫне, тата ҫаксем пур: эсэсевецсен «Виле пуҫ» ятлӑ 3-мӗш танковӑй дивизийӗн командирӗ БЕКЕР генерал-майор, 540-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ ГОТМАЛЬК генерал-майор. 602-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ ШАРТОВ генерал-лейтенант, 603-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ МОЛЛЕР генерал-лейтенант, полици дивизийӗн командирӗ — полици генерал-майорӗ БАЛЛЬ, БРНО хулин коменданчӗ ЛИДЕРМАНН генерал-лейтенант, строительнӑй участок штабӗн начальникӗ АНГЕЛЬШТУК генерал-майор, 21-мӗш танковӑй корпус артиллерийӗн командующийӗ КАМЧЕНКЕЛЬМ генерал-майор, строительнӑй участок штабӗн начальникӗ ГОТШИЛК генерал-майор пур. Ҫав вӑхӑт хушшинчех фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—58, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 596, хир тупписем—1.348, пулеметсем—1.115, винтовкӑсемпе автоматсем—40.570, бронетранспортерсем—422, автомашинӑсем—16.154, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—4.615, лашасем—12.000.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче пӗр йӗркесӗр парӑннӑ 126.070 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тата 5 генерала тыткӑна илнӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—284, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—235, хир тупписем — 1.224, минометсем—530, пулеметсем — 12.473, винтовкӑсемпе автоматсем — 36.268, бронетранспортерсем — 185, автомашинӑсем—4.296, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—5.355, лашасем — 8.914.

Ҫапла вара, майӑн 9-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче мӗнпур фронтсенче 1 миллион та 60 пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тата 91 генерала тыткӑна илнӗ. Ку шута БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсене майӑн 11-мӗшӗнче тыткӑна парӑнса пӗтернӗ нимӗҫ салтакӗсен ушкӑнӗ те кӗрет.

А. С. ЩЕРБАКОВА ПЫТАРНИ

Майӑн 12-мӗшӗнче Мускав Александр Сергеевич Щербакова пытарнӑ.

А. С. Щербаковӑн ӳтне ҫунтарнӑ хыҫҫӑн унӑн кӗлне, савӑта (урнӑна) хурса, майӑн 12-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Союзсен Ҫуртӗн Колоннӑллӑ залне лартнӑ. Ӳллӗ вырӑнта йышлӑ чечек кӑшӑлӗсемпе ҫыххисем хушшинче 9 пурҫӑн минтер ҫине 3 Ленин орденӗ, 1-мӗш степень Суворов орденӗ, 1-мӗш степень Кутузов орденӗ, 1-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Мускава хӳтӗленӗшӗн» медаль вырнаҫтарса хунӑ. Совет правительстви ҫав орденсемпе А. С. Щербакова мирлӗ строительство вӑхӑтӗнче тата Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче хамӑр Тӑван ҫӗршывшӑн ҫав тери паха ӗҫсем тунӑшӑн наградӑланӑ. Унтах СССР Верховнӑй Совет депутачӗн тата УССР Верховнӑй Совет депутачӗн значокӗсене вырнаҫтарса хунӑ.

Тайса хунӑ питӗ пысӑк ялав тӗлӗнче —пирӗн партин чаплӑ ывӑлӗн, пӗтӗм совет халӑхӗ хӗрӳллӗ юратаканскерӗн, портречӗ ҫакӑнса тӑрать.

Зала ҫынсене ирхине 7 сехетре кӗртме пуҫлаҫҫӗ. А. С. Щербаков кӗлне хунӑ савӑт ҫумӗпе Мускав районӗсен, ҫар чаҫӗсемпе шкулӗсен делегацийӗсем, автозавод ҫыннисем, краснопролетарецсем, фронтовиксен делегацийӗсем иртеҫҫӗ. вӗсем большевиксен партийӗн, совет государствин тата Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫав тери чаплӑ деятельне юлашки хут курса хисеп тума пынӑ.

Кӗл хунӑ савӑт тавра ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен чечек ҫыххисем хураҫҫӗ. Вӗсене рабочисем, инженерсем, ученӑйсем, студентсем, учительсем илсе пынӑ. А. С. Щербаковӑн пурнӑҫӗ вӗсемшӗн хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе тӑмалли пример пулса тӑрать. А. С. Щербаков, аслӑ Сталинӑн вӗренекенӗпе юлташӗ пулса тӑрса, совет ҫыннисене хӑй пек ӗҫлеме вӗрентнӗ—хамӑр Тӑван ҫӗршыва юратма, большевиксен партине чунтан парӑнса ӗҫлеме, хӑйӗнчен те, ыттисенчен те ӗҫре тивӗҫлине нумай ыйтма, ҫынсем ҫине, кадрсем ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхма вӗрентнӗ.

Хисеплӗ хуралта совет наукин деятелӗсем, искусство мастерӗсем, ученӑйсем, литераторсем ылмашӑнса тӑраҫҫӗ. Хисеплӗ вахтӑна колхоз председателӗсемпе агрономсем, ӗне сӑвакансемпе трактористсем, врачсемпе инженерсем тӑраҫҫӗ.

Залра Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем, офицерӗсем, генералӗсем нумай. Хӗрлӗ Ҫарӑн политикӑллӑ главнӑй управленийӗн начальникӗ. Хӗрлӗ Ҫарта партипе политика ӗҫне йӗркеленӗ чи пысӑк организатор вилни совет воинӗсене питӗ хуйхӑртнӑ. Хисеплӗ вахтӑра Совет Союзӗн чапа тухнӑ геройӗсемпе пӗрле Мускава паттӑррӑн хӳтӗленӗ ҫынсем, истребительнӑй батальонсен, сывлӑшран тапӑнассине хирӗҫ кӗрешекен оборона подразделенийӗсен представителӗсем тӑраҫҫӗ; ҫав батальонсемпе подразделенисене А. С. Щербаков ертсе пынипе организациленӗ, вӗсем Мускав патӗнче нимӗҫ захватчикӗсене аркатса тӑкас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑннӑ.

Хисеплӗ хурал кашни виҫӗ минутран улшӑнать. Хуралта Ленин хулинчи делегатсем, Мускав патӗнчи ҫӗркӑмрӑк бассейнӗнчен янӑ шахтерсем, Мускав облаҫӗнчи Руза районӗнчи ӗҫҫыннисен, ҫар академийӗсен представителӗсем тӑраҫҫӗ.

Виҫӗ сехет ҫитнӗ. Кӗл хунӑ савӑт патне Совет Союзӗн Маршалӗ Буденный, авиацин Главнӑй Маршалӗ Новиков, авиаци Маршалӗ Фалалеев, бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗсем Федоренко тата Ротмистров пырса тӑраҫҫӗ.

3 сехет те 30 минутра зала ҫынсене яма чарӑнаҫҫӗ. Щербаков кӗлӗ патӗнче ӑна пытарма тунӑ Правительство комиссийӗн членӗсем, А. С. Щербаковӑн тусӗсемпе хурӑнташӗсем юлаҫҫӗ.

Хисеплӗ хуралта юлашки хут Андреев, Шверник, Вознесенский тата Правительство комиссийӗн членӗсем тӑраҫҫӗ.

Шӑп 4 сехетре вӗсем кӗл хунӑ савӑта ҫӗклеҫҫӗ те алӑк патнелле каяҫҫӗ, малта генералсен пӗр ушкӑнӗ А. С. Щербаковӑн орденӗсене вырнаҫтарса хунӑ минтерсене илсе пыраҫҫӗ. Унтан ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ, Сталин юлташ, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ, СССР Оборона Халӑх Комиссариачӗ, РСФСР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ, РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, ВКП(б) Мускав хулипе область комитечӗсем, ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула Совечӗ хунӑ чечек кӑшӑлӗсене илсе тухаҫҫӗ.

Хуйхӑллӑ процесси Охотнӑй ряд, Манежнӑй площадь урлӑ Хӗрлӗ площаде каять.

Ӑна ҫул тӑршшӗпе хисеплӗ ҫар хуралӗ хуралласа пырать. Сывлӑшра Шопен маршӗн хурлӑхлӑ кӗвви янраса тӑрать. Хӗрлӗ площадьре ҫарсем, ялавӗсене тайтарса, пӗр хускалмасӑр тӑраҫҫӗ. Площадьрех столицӑри ӗҫҫыннисен йышлӑ представителӗсем — фабрикӑсемпе заводсен, шкулсен, центральнӑй учрежденисен делегацийӗсем—пухӑннӑ.

Мавзолей трибуни ҫине Сталин юлташ, Ворошилов, Берия, Маленков, Каганович, Шверник, Вознесенский, Андреев, Буденный, пытарма тунӑ Правительство комиссийӗн членӗсем хӑпарса тӑраҫҫӗ.

А. С. Щербаков ячӗпе пухнӑ хурлӑхлӑ митинга Г. М. Попов юлташ уҫать. ЦК ВКП(б) тата СССР Халӑх Комиссарӗсен ячӗпе—СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗн Пӗррешӗ Заместителӗ Н. М. Шверник юлташ, столицӑри ӗҫҫыннисен ячӗпе—ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула Совечӗн исполкомӗн Председателӗ Г. М. Попов юлташ, СССР Оборона Халӑх Комиссариачӗ ячӗпе — Ф. И. Голиков генерал-полковник тата Мускав облаҫӗнчи ӗҫҫыннисен ячӗпе — ВКП(б) Мускав область комитечӗн секретарӗ Е. Н. Черноусов юлташ сӑмах тухса калаҫҫӗ.

Сӑмахсене каласа пӗтернӗ хыҫҫӑн Попов юлташ хуйхӑллӑ митинга хупнӑ тесе пӗлтерет.

Сталин юлташ, Ворошилов, Берия, Каганович, Маленков, Вознесенский, Андреев, Буденный тата Правительство комиссийӗн членӗсем трибуна ҫинчен анаҫҫӗ те, кӗл хунӑ савӑта ҫӗклесе, Кремль стени патне каяҫҫӗ. Унта мрамор хӑмипе юнашар (ҫав хӑма айӗнче Совет Союз Маршалӗн Б. М. Шапошниковӑн кӗлӗ выртать) шӑтӑк хатӗрленӗ. Шверник юлташ ҫав шӑтӑка А. С. Щербаков кӗлне хунӑ савӑта лартать. Минут иртсен шӑтӑка мрамор плитипе питӗрсе лартаҫҫӗ, плита ҫине ылттӑн саспаллисемпе ҫапла ҫырса хунӑ:

Александр Сергеевич
Щербаков
19-10/X-01—19-10/V-45

Артиллери вӑйлӑн персе ярать. Столица тата унпа пӗрле пирӗн пӗтӗм Тӑван ҫӗршыв совет халӑхӗн чаплӑ ывӑлне, совет государствин ҫав тери паллӑ деятельне Александр Сергеевич Щербакова ҫар енчен хисеп тӑвать. Хурлӑхлӑ маршӑн кӗвви вырӑнне савӑнӑҫлӑ кӗвӗ Александр Сергеевич Щербаковӑн вилӗмсӗр ӗҫне ҫиеле кӑларакан кӗвӗ—Совет Союзӗн государство гимнӗн кӗвви янӑраса каять.

Хӗрлӗ площадь урлӑ савӑнӑҫлӑ маршпа, тайӑнтарнӑ ялавсемпе Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем—пехотинецсем, летчиксем, танкистсем, кавалеристсем пыраҫҫӗ. Вӗсем А. С. Щербакова—Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫав тери чаплӑ деятельне, хӑйӗн мӗнпур вӑйне тӑшмана ҫӗнтермешкӗн панӑскере, ҫар енчен юлашки хут хисеп тӑваҫҫӗ.

Верховнӑй Главнокомандующий Совет Союзӗн Маршалне И. В. СТАЛИНА янӑ телеграмма

Гитлерла Германие ҫӗнтернӗ самантра, ҫак калама ҫук чаплӑ самантра, Югослави халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫара тата Совет Союзӗн халӑхне хӗрӳллӗн саламлать, пӗтӗм этемлӗхе ҫӑлса хӑвармашкӑн тата унӑн малашнехи пурнӑҫне лайӑх тумашкӑн питӗ вӑйлӑ тӑрӑшнӑшӑн тата ҫав тери пысӑк жертвӑсем тӳснӗшӗн вӗсене чунчӗререн тӑванла тав тӑвать.

Югослави Маршалӗ ТИТО.

1945 ҫулхи майӑн 9-мӗшӗ.
Белград.

Югослави Маршалне Иосип Броз-Титона Югослави Министрӗсен Совечӗн Председательне янӑ телеграмма

БЕЛГРАД.

Гитлерла Германие пӗтӗмпех тата таткӑланах аркатса тӑкнӑ май туслӑн саламланӑшӑн Сире тата Югославин тӑванла халӑхӗсене пӗтӗм чӗререн тав тӑватӑп. Ҫакӑнпа пӗрлех эпӗ Сире тата Югослави халӑхӗсене Германи империализмне ҫӗнтернипе хӗрӳллӗн саламлатӑп, ҫав империализмпа кӗрешнӗ чухне Югославин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем тата пӗтӗм халӑхӗ хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартрӗҫ.

И. СТАЛИН.

ХИСЕП ХӐМИ

Чӑваш АССР Наркомземӗпе ВКП(б) Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫак МТС-сене кӗртнӗ.

Вӑрнар МТС-не (директорӗ Никонов юлташ, пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ Платонов юлташ). Ҫак МТС ҫуркунне тракторпа тумалли ӗҫсен планне 104 процент тултарнӑ, ҫав шутра газогенераторлӑ тракторсемпе — 112 процент тултарнӑ.

Ҫуракинче уйрӑмах ҫаксем палӑрнӑ: комсомолецсемпе ҫамрӑксен 7-мӗш бригади (бригадирӗ Алексеев юлташ). Ҫак бригада ҫуркунне тракторпа тумалли ӗҫсен планне 198 процент тултарнӑ. 2-мӗш бригада (бригадирӗ Мишаков юлташ). Вӑл плана 160 процент тултарнӑ. 14-мӗш бригада (бригадирӗ Михайлов юлташ). Вӑл плана 151 процент тултарнӑ.

Трактористсем—Ульяна Порфирьева, Мария Кузьмина, Нина Егорова, Ирина Машанова, Александр Макаров. Вӗсем хӑйсен заданийӗсене чылай ирттерсе тултарнӑ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен Шӑхасан райсовечӗн исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ҫуракинче тухӑҫлӑн тата лайӑх ӗҫленӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

3. Гвардеец» колхоз (колхоз председателӗ Ф. Т. Тихонов юлташ). Колхоз 250 гектар тӗштырра 8 кун хушшинче акса пӗтернӗ, агротехника правилисене тӗплӗн пурнӑҫласа пынӑ. Тӗштырӑсен пӗтӗм лаптӑкне яровизациленӗ тата чӳхесе тасатнӑ вӑрлӑхпа акнӑ.

4. Куйбышев ячӗпе тӑракан колхоз (колхоз председателӗ Христофоров юлташ). Колхоз 256 гектар тӗштырра лайӑх пахалӑхпа 8 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Тырӑсен пӗтӗм лаптӑкне яровизациленӗ тата чӳхесе тасатнӑ вӑрлӑхпа акнӑ.

5. «Красный партизан» колхоз (колхоз председателӗ И. В. Васильев юлташ). Колхоз 88 гектар тӗштырра ? ӗҫ кунӗнче, лайӑх акса хӑварнӑ.

6. «Новая жизнь» колхоз (колхоз председателӗ Л. П. Павлов юлташ). Колхоз 104 гектар тӗштырра 6 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

СССР Финанс Халӑх Комиссариачӗ пӗлтерни

1945 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнче Государствӑн 25 миллиард тенкӗлӗх кӑларнӑ Тӑваттӑмӗш Военнӑй Заемне 8 кун хушшинче 26 миллиард 384 миллион та 685 пин тенкӗлӗх сарнӑ, урӑхла каласан, кӑларнӑ суммӑран 1 миллиард 384 миллион та 685 пин тенкӗлӗх ытларах сарнӑ.

Ҫакна пула ӗнтӗ, СССР Совнаркомӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, СССР Финанс Халӑх Комиссариачӗ 1945 ҫулхи майӑн 14-мӗшӗнчен пуҫласа пур ҫӗрте те заема малалла ҫырӑнтарма чарма хушнӑ.

Республикӑра заем сарнин итогӗсем

Майӑн 14-мӗшӗ тӗлне, Государствӑн Тӑваттӑмӗш Военнӑй Заемне республикӑра пурӗ 139.347.000 тенкӗлӗх вырнаҫтарнӑ. Ҫакӑ вӑл заема сарма бюджетпа пӑхнин 101,7 проценчӗ пулать. Вӑл шутран: колхозниксемпе единоличниксем — 85.627.000 тенкӗлӗх, рабочисемпе служащисем—40.347.000 тенкӗлӗх, колхозсем—12.373.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Заем укҫине республикӑра пурӗ 39.410.000 тенкӗ пухнӑ. Ҫакӑ вӑл заема сарнин 28 проценчӗ пулать. Вӑл шутран: колхозниксемпе единоличниксем —33.806.000 тенкӗ, рабочисемпе служащисем—545.000 тенкӗ, колхозсем — 5.059.000 тенкӗ тӳленӗ.

Заем укҫине пухас тӗлӗшпе Муркаш, Куславкка тата Вӑрмар районӗсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем заем укҫине сарнин 70—80 проценчӗ чухлӗ пухнӑ. Чурачӑк, Вӑрнар, Красноармейски тата Сӗнтӗр районӗсем те укҫа пухас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫӗнӗ консерватори

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Аслӑ шкул комитечӗпе Искусство комитечӗ Хусанта консерватори уҫма йышӑннӑ. Консерваторире 5 факультет пулмалла: фортепиано факултечӗ, оркестр факультечӗ, юрлама вӗрентекен факультет, хор дирижорӗсен факультечӗ тата теорипе композиторсен факультечӗ. Консерваторире кӑҫал октябрӗн 1-мӗшӗнче вӗрентме пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

СССР Наука академийӗ 220 ҫул тултарас умӗн

Ленинградри литература институтӗнче СССР Наука академийӗ 220 ҫул тултарнӑ ятпа наукӑллӑ сесси уҫӑлнӑ.

«Ленинпа Сталин тата совет литературоведенийӗ» ятлӑ темӑпа филологи наукисен докторӗ Л. А. Плоткин профессор доклад туса панӑ. А. С. Орлов академик хӑйӗн докладӗнче авалхи Раҫҫейри литература памятникӗсене тӗпчесе вӗренни ҫинчен тата совет литературоведенийӗсем «Вырӑссен авалхи литератури» ятлӑ кӗнеке ҫырни ҫинчен каласа панӑ.

Филологи наукисен докторӗ П. Н. Берков профессор «Ломоносов тата Раҫҫейри литература науки» ятлӑ темӑпа доклад туса панӑ.

Институтра СССР Наука академийӗ литературоведени тӗлӗшпе 220 ҫул хушшинче пичетлесе кӑларнӑ кӗнекесен выставки уҫӑлнӑ. (ТАСС).

Вырăссен аслă ученăйĕ И. И. Мечников

(Майăн 15-мĕшĕнче вăл çурални 100 çул тултарнă майĕпе)

Илья Ильич Мечников ячĕ пирĕн çĕршывра кăна мар, ют çĕршывсенче те питĕ паллă.

Наукăн нумай деятелĕсен кун-çулĕсене пăхса тухнă чухне, эпир вĕсем хăйсен специальноçне мĕн пĕчĕкренех суйласа илнине тата ăна юратнине асăрхама пултаратпăр. Сăмахран, гениллĕ Дарвин мĕн çамрăкранах çутçанталăкри улшăнусене тĕпчесе вĕренме тăрăшнă, пирĕн çĕршывра пурăннă аслă ученăй М. И. Пирогов çамрăклах медицинăна юратнă. Çавăн пекех ĕнтĕ Мечников та çамрăклах биологи наукисене юратма тытăннă. Ача чухнех вăл лĕпĕшсем хыççăн чупса çÿренĕ, нăрăсем тытнă та хурт-кăпшанкă коллекцийĕсем тунă. Хăйĕн ĕмĕрĕн мĕн юлашки кунĕ çитиччченех вăл хăйĕн пурнăçне биологипе, зоологипе, патологипе çыхăнтарнă. Выльăх-чĕрлĕхсемпе этемĕн чир-чĕрĕсене тĕпчесе вĕренесси унăн тĕп ĕçĕ пулнă.

Хăйĕн пысăк пултарулăхне пула, Мечников вăтам тата аслă шкулсенчен хăвăрт та ăнăçлă вĕренсе тухнă. гимназие вăл ылттăн медальпе пĕтернĕ, университетра 4 çул вĕренес вырăнне 2 çулта вĕренсе тухнă.

Ку ĕç иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче, Писаревăн произведенийĕсене тимлесех вуланă тата Тургеневăн Базаровĕ çинчен каласнă вăхăтра пулнă. Шăпах çак вăхăтра ĕнтĕ Дарвинăн «Тĕссем пулса кайни» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă. Малта пыракан студентсем çине тăрсах çутçанталăка вĕренме тытăннă.

1864 çулта естественнăй наукăсен кандидачĕн ученăй степеньне илнĕ 19 çулхи Мечников хăйĕн пĕлĕвĕсене аслăлатса тăрăнлатма шут тытнă. Вăл хăйĕн сахал укçи-тенкипех ют çĕршыва тухса кайнă та Францири, Италири тата Германири паллă ученăйсем патĕнче çутçанталăк çинчен вĕренме тытăннă. Неапольте вăл вырăссен ученăйĕпе А. С. Ковалевскипе пĕрле пĕр произведени çырнă. Çак произведени ĕнтĕ «танлаштарулла эмбриологи» ятлă çĕнĕ наукăн—урăхла каласан, тĕрлĕ чĕрчунсен аталанăвне вĕсен зародышĕнченех пуçласа тĕпчесе вĕренекен наукăн пуçламĕшĕ пулса тăрать.

Россиăна таврăнсан Мечников естественнăй наукăсен докторĕн ятне илме диссертаци çырнă та малтанах Одессăри университетра доцент пулнă, унтан наука тĕлĕшĕпе ĕçлес тесе, Петербурга куçнă. Петербургра Мечниковăн ĕçĕ ăнăçлах пулман. Лаборатори сивĕ те юрăхсăр пÿлĕмре пулнă, ку ĕнтĕ тĕплĕн ĕçлеме питĕ кансĕрленĕ. Кун çумнех тата хăйĕн пурнăçĕнчи хуйхă та хутшăннă. Мечников паллă Бекетов профессор тăванĕн хĕрне—Людмила Федоровнăна, сывмарскере, качча илнĕ те лешĕ вара тепĕр тăватă çултан ÿпке чирĕпе чирлесе вилсе кайнă.

1870 çулта Петербургри медицинăпа хими Академийĕнче профессор кирлĕ пулнă. Мечникова паллă ученăй И. М. Сеченев, Мечников паллă ученăй пулассине малтанах пĕлсе тăнăскер, рекомендаци панă пулин те, Академири реакциллĕ профессорсем, Мечникова «хĕрли» вырăнне хурса, ĕçе илмен. Çакна хирĕçлесе Сеченов тепĕр кунах Академирен тухса каймашкăн заявлени панă. Мечниковăн Петербургран тухса каймалла пулнă. Вăл Одессăри университетра профессор вырăнне йышăнма килĕшнĕ. Анчах кунта та реакциллĕ профессорсем ăна канăç паман.

Мечников политика деятелĕ пулман. Анчах вăл наукăна патша чиновникĕсен атти таптаса тăнипе, патша правительстви малта пыракан студентсене хĕсĕрленипе килĕшме пултарайман. Университетра кăшт ĕçленĕ хыççăн, профессорăн ирĕксĕрех унтан тухса каймашкăн заявлени памалла пулнă. Чăтамлăх савăтне тултаракан тумлам—университет деканĕн социализмлă шухăшсене саракан «диссертацисене пăрахăçласси» çинчен калакан приказĕ пулнă.

Университетран тухса кайнă хыççăн Мечников—ун чухнех паллă ученăй, наука тĕлĕшпе ĕçлемелли нимĕнле условисем те пулман пирки тата йывăр пурнăç пирки, Полтава кĕпернинче эпидемиологăн вырăнне йышăнма килĕшнĕ.

1875 çулта Мечников иккĕмĕш хут авланса Ольга Николаевна Белокопытовăна качча илнĕ. Ольга Николаевна Мечниковăн юлашки кунĕччченех шанчăклă тусĕ, унăн наука тĕлĕшĕнчи ĕçĕнче çывăх юлташĕ татах пулăшаканĕ пулнă. Мечников арăмĕн ашшĕ вилнĕ хыççăн, вăл Киев кĕпернинче пысăк поместьĕн хуçийĕ пулса тăнă. Кунта вăл наука тĕлĕшĕнчен ĕçлеме, тырпула сиен тăвакан «кузька» ятлă нăрăна тĕпчесе вĕренсе, унпа кĕрешмелли мел шыраса тупнă.

Анчах именири пурнăç унăн наука тĕлĕшĕнчи ĕçĕсене пулăшса пыман. Вăл наука тĕлĕшĕнчен ĕçлемелли майлăрах вырăн тупас тесе. çав тери тăрăшнă: е ют çĕршывсене кайса çÿренĕ. е каллех Россиăна таврăнса. ĕçлеме хăтланса пăхнă. вара 1885 çулта Одессăра пĕрремĕш бактериологи станцине туса лартнă. Кунта вăл тыркаса пĕтерес задачăна



лартса, вĕсене чăх халерĕ сыпса ертме тытăннă. Анчах та Одессăри градоначальник, хăйĕн пĕлменлĕхне кура, чăх халерне этем халерĕпе пĕрлештерсе янă та Мечников опычĕсене пула халăх хушшинче халер сарăлассинчен сыхланас тесе, опытсем тума чарса лартнă.

Вара Мечников ют çĕршыва тухса кайнă.

Германире «наукăн» арийски жрецĕсем ăна мăн кăмăллăн та сиввĕн кĕтсе илнĕ. Мечниковăн халĕ питĕ паллă «Организмăн сыхлама пултаракан вăйĕсем çинчен» калакан вĕрентĕвне «Азирен килнĕ юмах» вырăнне хунă. Ученăй вара Парижа кайнă та кунта ăна паллă ученăй Пастер чыслăн кĕтсе илнĕ. Пастер институчĕн лабораторийĕнче, хăйне хисеплекен, юратакан, сума сăвакан çынсем хушшинче вăл мĕн виличченех ĕçленĕ. Анчах вăл Парижра пурăннă чухне те, хăйĕн мĕнпур вăйне наукăна парса, хăйне вырăс çынни вырăнне хума пăрахман. Вăл вырăс çĕршывĕнчи ĕçсемпе интересленнĕ, вырăс халăхне юратнă.

* * *

Наукăра Мечников хăйĕн иммунитет теекен вĕрентĕвĕпе—организм ерекен чирчĕре парăнманни çинчен калакан вĕрентÿпе паллă пулса тăрать. Мечниковăн гениллĕ ĕçĕ, малтанлăха пăхсан, питĕ ансат фактсенчен пуçланса кайнă. Тинĕ çăлтăрĕн витĕр курăнакан личинкин пĕчĕк ÿчĕ çине Мечников пĕр вĕçĕнчен шĕвĕртсе вĕçне хуçнă çинçе кантăк патак чиксе хунă. Микроскоп витĕр вара ученăй тĕлĕнмелле япала курнă: патак йĕри-тавра юнăн шурă шарикĕсем (лейкоцичĕсем) пухăннă. Вĕсем çапла майпа личинкăн ÿтне сыхласа патака сырса илнĕ. Мечников çакна тепĕр опытра тĕрĕслесе пăхнă: шыв пăрçин (дафнин) ÿчĕ çине кăмпан йĕпне (спорине) тирсе лартнă. Микроскоп витĕр тĕпчевçĕ çавнашкал япаланах курнă: йĕп тавра лейкоцитсем пухăнса йĕпе çавăрса илнĕ; вĕсем хăйсен ури пеккисене чăсса йĕпе хăйсем ăшне ĕмсе илнĕ те—ăна ирĕлтерсе янă; лейкоцистсем ăшĕнчи йĕп тĕксĕмленнĕçемĕн тĕксĕмленсе пырса юлашкинчен вуçех пĕтсе ларнă. Çапла ĕнтĕ, тенĕ Мечников, чĕрĕ организмра «сыхлав вăйĕсем» пур. Çак лейкоцитсене вăл грексен: фаго—çиетĕп, цитос—клетка сăмахĕсемпе усă курса, «фагоцитсем» тесе ят панă. Апла пулсан, организма инфекци (микробсем) пырса кĕрсен, сыхлав вăйĕсемпе (фагоцитсемпе) тăшман (бактерисем) хушшинче вăрçă пуçланса каять. Пÿр вăл — боецсен—фагоцитсен, бактерин наркăмăшĕпе вилнĕскерсен, виллисем пулса тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ кĕрешÿ мĕнле вĕçленесси хăш енĕ—тапăнакан е сыхлакан енĕ—вăйларахинчен килет. Çакăнтан ученăй çакăн пек вывод тунă: ерекен чирсемпе кĕрешес ĕç ăнăçлă пытăр тесен, организмăн сыхлав вăйĕсене çирĕплетмелле, инфекцин вăйĕсене чакармалла. Пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн пĕтĕм профилактикăн никĕсĕ Мечниковăн çак вĕрентĕвĕ çинче тăрать. Профилактика вăл организмăн сыхлав вăйĕсене ÿстерессишĕн, ăна тĕрлĕ чир-чĕрсене парăнмалла мар тăвассишĕн тăрăшать. Тĕрлĕрен ерекен чирсенчен сыпасси те ĕнтĕ çакăн çинчех никĕсленсе тăрать.

Чеччене детритпа, урăхла каласан, чеччен вăйсăрлатнă пуçламăшĕпе, сыпаççĕ. Организм вара çак вăйсăрлатнă ерекен чирпе кĕрешнĕ чухне кĕрешĕве хăнăхать те, чăн-чăн чеччене хирĕç кĕрешмелли хăйĕн «сыхлав вăйĕсене» пысăклатать, вăл «иммунитетлă», урăхла каласан, чеччене парăнми пулать. Çапла ĕнтĕ, Мечников вĕрентĕвĕ ерекен чир-чĕрсемпе кĕрешес ĕçре, наукăн иммунитет çинчен калакан пайĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Чăнах та, Мечников хыççăн унăн сыхлав вăйĕсем тата иммунитет çинчен калакан вĕрентĕвне кăшт улăштарса тĕрĕсрех тунă. Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, ку вĕрентÿ хăйĕн пĕлтерĕшне ку таранччен те çухатман-ха.

Организмăн сыхлав вăйĕсем çинчен калакан ыйтăва тата ерекен чирсемпе кĕрешес ыйтăва тĕплĕнрех тĕпчесе вĕреннĕ май, Мечников этем пурнăçне вăрăмлатас тĕлĕшпе наукăллă-философиллĕ ыйту кăларса тăратнă. Вăл хăйĕн медицина журналĕсенче кăна мар, тата обществăллă-политикăллă хаçатсенче те пичетленсе тухнă «Этем пурнăçĕ çинчен» ятлă пуринишĕн те ăнланмалла çырнă произведенийĕнче çакăн пек вывод тунă: этем вăхăтсăр ватăлнин сăлтавĕ—этем организмĕ пыршăран тухакан тĕрлĕрен ядсемпе сиенленнинчен килет. Пыршăсенче çĕрме кансĕрлекеннисем пурте, тенĕ ученăй, çав вăхăтрах ватăлассипе те вăраха хăварма пултараççĕ. Çакна тăвас тесен, пыршăсенче усăллă микробсем çитĕнтерме пултаракан, çав вăхăтрах çĕртекен микробсене çитĕнме чарма пултаракан апат-çимĕç çисе пурăнмалла. Мечников сахалрах какай çиме, ытларах пахчаçимĕçсем, сад çимĕçĕсем, пуринчен ытла сĕт-турăх çисе пурăнма сĕннĕ. Мечников уйрăм майпа йÿçетнĕ сĕте—«Болгари турăхĕ» текенскере раснах сĕннĕ. «Болгари турăхне» вăл халăх хушшинче сарма тăрăшнă, хăй те ăна ытларах çисе пурăннă. «Кам 100—120 çула çитиччен вилет,—тенĕ Мечников,—вăл вăхăтсăр вилет». Ватăлсан та вăя çухатманни, ун хыççăн вара чăн-чăн ватăлăх вилĕмĕпе вилни—пурнăç тулнин результачĕ пулать, вилĕмĕ хăй те сывăрас килнĕ пек пулса çитет. Ученăй çапла каланă: сисĕмсем йĕркеллĕ аталанса пырса ватăлăха лăпкăн çитни, юлашкинчен вара пурнăç тулнине сисни—çыншăн питĕ пысăк телей пулса тăрать. Вара тин çынăн вилĕмрен хăрасси пĕтсе ларĕ. Вилĕм çинчен шухăшлани—ĕçлесе ывăннă хыççăнхи ыйхă çинчен шухăшланипе пĕрешкелех пулмалла.

Мечников 71 çулта кăкăр чирĕне чирлесе вилнĕ. Хăй нумай пурăннине вăл йышăннă йĕркене çирĕп пăхăнса пынипе ăнлантарса панă. Унăн çемьинчи ытти çынсем те 50 çултан иртсен тин вилнĕ. Мечников çапла каланă: «Çак режима, эпĕ ăна склероз пуçланиччен усă курма тытăннă пулсан, вăл манăн пурнăçа тăсма пултараканскере, ватăлсан тин пăхăнса пурăнма тытăннишĕн питех те хуйхăратăп».

Этем пурнăçне тăсас ыйтăва Мечников биологипе патологи енчен çеç сÿтатса панă. Вăл ĕçпе йăла условийĕсене, паллах ĕнтĕ, çынăн сывлăхĕпе унăн ĕмĕрĕн вăрăмĕшĕнче паллă вырăн йышăнса тăраканскерсене, шута илмен. Çакна пирĕн совет çĕршывĕнчи пурнăç лайăх ăнлантарса парать: пирĕн çĕршывра этем пурнăçĕн вăтам вăрăмăшĕ, революцичченхине танлаштарсан, чылай пысăк. Этем пурнăçне вăрăмлатмалли пĕртен-пĕр шанчăклă çул вăл—социализм пулса тăрать. Çапах та çакă аслă ученăйăн ăслăлăхри ĕçĕсене хупласа лартма пултараймасть. Йăлтах урăхла, шăпах социализм тапхăрĕнче ĕнтĕ ĕçсыннисен сарлака массисем валли Мечников ĕмĕтленнĕ пурнăç йĕркисене тумалли условисем çителĕклĕ пулаççĕ.

* * *

Мечников пĕррелĕш империализм вăрçин хăрушлăхĕсене питĕ йывăррăн чăтса ирттернĕ. Вăл ун чухне нимĕçсем тунă тискерле ĕçсене пĕтĕм чĕререн питленĕ. Вăл, политикăран аякра тăраканскер, наука, пĕлÿ çитĕннĕ пулин те, вăрă-хурахла вăрçăсем мĕншĕн пулнине ăнланса илеймен. Вăл нимĕçсен империализмла захватчикĕсен, халĕ Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ паттăрла аркатса тăкнăскерсен, кашкăрла шухăш-кăмăлĕсене, кашкăрла йăлисене пĕлмен. Анчах вăл хăйĕн тăван çĕршывне юратнă, вăл тăван çĕршывăн патриочĕ пулнă, хăйĕн мĕнпур вăйне общество интересĕсене панă.

Мечниковăн—малта пыракан наука представителĕн, ученăйăн, этем йăхĕн телейĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекенĕн ятне халăхсем ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕç.

М. СЕМАШКО академик,
Наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Çулпуç чĕнсе калание ответлесе

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташ Тăван çĕршыври халăха вăрçă пĕтнĕ ятпа чĕнсе калание республикăри ĕçсыннисем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çулпуç чĕнсе калание вĕренмешкĕн предприятисемпе артельсенче пухусем пулса иртеççĕ. Çавăн пек пухусем Шупашкарти Якунин, Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсен, Çĕмĕрле комбиначĕн чылай цехĕсенче пулса иртнĕ. Рабочисем, Сталин юлташ чĕнсе калание ответлесе, Тăван çĕршыва малалла тĕреклетсе пырассишĕн çĕнĕ вăй-хăватпа ĕçлеме пулнă.

Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăрту пуçарса яракан Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ апрельти производство программине 10 процент ирттерсе тултарнă. Çак çĕкленÿллĕ кунсенче комбинат коллективĕ татах та тухăçлăрах ĕçлет. Чылай стахановецсем, иртнĕ уйăхра 2—3 норма тултарнăскерсем, халĕ 3—4-шар норма тултараççĕ. Çавăн пек тухăçлă ĕçленĕшĕн заводри 55 çынна «чи лайăх стахановец» ятне панă «Чи лайăх слесарь» ятне илнĕ Емелин апрельти нормăна 480 процент, Пастухов —375 процент, Кириллова—350 процент тултарнă. Çак савăнăçлă кунсенче вĕсем иртнĕ уйăхринчен те тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Сăмахран, Пастухов юлташ вăрçă чарăннă хыççăн 4-шар норма тултарать.

Московченко цехĕнчи Корнеев токарĕн, Шутов цехĕнчи Порфирьев станочникăн ĕçĕсем те кулленхи нормăран 4 хут тухăçлăрах.

— Çĕршывра мирлĕ строительство тапхăрĕ пуçланчĕ. Халĕ пирĕн ĕç халăх пурнăçне лайăхлатма, Тăван çĕршыва тĕреклетме пулăшать. Ĕçлес килет, çĕнĕ вăй-хăватпа, çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлес килет!—теççĕ комбинатри стахановецсем, ювлă вăрçă чарăннăшăн савăнса. çулпуç чĕнсе калани çине ответлесе.

ТĔШТЫРĂСЕМПЕ КУРĂКСЕНЕ АКСА ПĔТЕРМЕЛЛИ ВУНĂКУНЛĂХ

ĔÇЕ ЛАЙĂХ ПАХАЛĂХПА ТĂВАÇÇĔ

ИШЛЕЙ. «Пархикасси» колхоз тырпул тухăçлăхне çулран-çул ÿстерсе пырать. Ку колхозра, тырпул тухăçлăхне ÿстерес тесе, уйри ĕçсене питĕ те пахалăхлă тăваççĕ. В. Кудряшов, В. Смирнов сухаçăсем çамрăк пулин те ĕçе лайăх тăваççĕ, кулленхи нормăна 130—140-шер процент тултараççĕ. Лашасене вăхăтра кантарса, хăйсемех тăрантараççĕ.

Колхозри пахалăх инспекторĕсем М. Толстовăпа Ф. Суркова колхозницăсем яланах уйра ĕçлеççĕ, акнине, сухаланине, çÿреленине тĕрĕслесех тăраççĕ. Колхоз председателĕ А. Максимов хăй те яланах уйра колхозниксем ĕçленине пăхса çÿрет, пахалăх пирки кирлĕ канашсем парать.

«Пархикасси» колхоз 85 гектар çуртри акса хăйĕн çураки планне тултарчĕ.

В. ГУСЬКОВ.

1.600 килограмм горючи перекетленĕ

КУСЛАВККА, майăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕнтерÿ кунĕ çитнипе савăнса МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеççĕ. Скворцов тата Башков юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсене пурнăçлаççĕ. Скворцов юлташ бригади плана ирттерсе тултарнă вăхăтрах 483 килограмм, Башков юлташ бригади—560 килограмм горючи перекетлерĕç.

Уйрăмăнах Александровпа Архипов трактористсем лайăх ĕçленине палăртмалла, вĕсем çуракине тухнăранпа 130 гектар сухаланă. Башков юлташ бригадинче ашшĕпе ывăлĕ—Осипсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ, вĕсем урапаллă тракторпа 126 гектар сухаланă.

Паянхи кун тĕлне пирĕн МТС çураки вăхăтĕнче тумалли ĕç планне 85 процент тултарнă, 1.600 килограмм горючи перекетленĕ. Трактористсемпе трактористкăсем майăн 15-мĕшĕ тĕлне çураки планне тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ,
МТС директорĕ.

Çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар

МУРКАШ, майăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Тĕштырăсемпе курăксем акса пĕтермелли вунăкунлăхра чылай колхозсем ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕç. Паянхи кун тĕлне 20 колхоз тĕштырăсем акса пĕтернĕ. Иртнĕ çулсенче юлса пынă колхозсем кăçал çураки вăхăтĕнче лайăх ĕçленине уйрăмах палăртмалла. «Герой» колхоз (председателĕ Отечественнăй Аслă вăрçă инваличĕ Партасов юлташ) кăçал мала тухрĕ. Кунта ĕçе пĕлсе организациленĕ, кашни сухаçă, акакан е çÿрекен уйрăм сдельщинăпа ĕçлет. О. Иванова, А. Троицкая, У. Халапсина колхозницăсем кашни кунах ĕç нормине 150-шар процент тултараççĕ. Çавăн пекех «Броневик», «Красная Чувашия», «Аврора», Маленков, Буденный, Суворов ячĕпе тăракан колхозсенче те ĕç тухăçлăхĕ пысăк.

«Герой» колхозра тĕштырăсем акса пĕтернĕ хыççăн, ферма çумĕнчи участока 4 гектар акнă.

Анчах та иртнĕ çул малта пынă чылай колхозсем кăçал чăтма çук юлса пыраççĕ. Кашмашри «Свобода» колхоз паянхи кун тĕлне плана пĕтĕмпе те 35 процента яхăн кăна тултарнă. Çавăн пекех Оринино ял Советне кĕрекен халиччен яланах малта пынă колхозсем те юлса пыраççĕ. Кунта ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн уполномоченнăйĕ Астрова юлташ уйхирте сахал пулать, ĕçе мĕнле организациленине пĕлмест. Панкли ял Советне кĕрекен колхозсем те юлса пыраççĕ. Иртнĕ çул малта пынипе лăпланса лармалла мар, ĕçе пикенерех тытăнмалла, çуракине палăртнă вăхăтра вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Ф. МАЛЫШКИН.

Агитаторсем—хирте

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямайкасси ял Советне кĕрекен «Большевик» колхозра çураки ĕçĕсем пуçланнăранпа массăллă ĕç нумай лайăхланчĕ. Уйра ĕçлекенсем хушшинче ку ĕçе туса пыма П. Даниловпа, Г. Борисов комсомолец-агитаторсене çирĕплетнĕ. Вĕсем сухаçăсене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, фронтри тата çĕршыври хыпарсене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Почта çĕнĕ хаçатсем илсе пырсанах агитаторсем бригадăсене, звеносене каяççĕ. Унта каннă вăхăтпа усă курса, кĕске каласусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ.

Агитаторсем уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар Берлина илни çинчен, государство çĕнĕ заем кăларни çинчен тата гитлерла Германи пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен пĕлтернисене васкавлăн та тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Колхозри кашни бригадăрах стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тăтăшах тухса тăраççĕ. Çĕнтерÿпе хавхаланнă колхозниксем вăйлă тырпулшăн нихăçанхинчен вăйлăрах кĕрешме сăмах пачĕç.

Г. ЗАХАРОВ.

Хĕрлĕ Çар Венгри промышленноçне юсаса ура çине тăратма пулăшни çинчен Такач Ференс калани

БУДАПЕШТ, майăн 13-мĕшĕ (ТАСС) «Амай нап» хаçат промышленность министрĕн Такач Ференсăн радиопа каланă сăмахне пичетлесе кăларнă. Ференс çапла каланă:

«Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем пĕр уйăх каярах нимĕç ирсĕрĕсене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларчĕç. Çапăçусем пĕтнĕ-пĕтменех заводсемпе шахтăсене Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсем-специалисчĕсем пыратчĕç те рабочисене производствăна юсаса хута яма пулăшатчĕç. Хĕрлĕ Çар пире экономика тĕлĕшпе те питĕ нумай пулăшрĕ, çавăншăн эпĕ ăна чун-чĕререн тав тăватăп».

КЛЕМЕНТИНА ЧЕРЧИЛЛЬ ГОСПОЖА АНГЛИЕ ТАВРĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 12-мĕшĕнче, Совет Союзĕ тăрăх çÿренĕ хыççăн. Лондона Клементина Черчилль таврăннă, ăна премьер министр У. Черчилль хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

ЭЙЗЕНХАУЭР ХĔВЕЛАНĂÇ ЕВРОПĂРИ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ПАРТИЗАНСЕНЕ ТАВ ТУНИ

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Люксембургри радио пĕлтернине парать. Çав пĕлтерÿре союзниксен Европăри экспедициллĕ вăйĕсен командующийĕ Эйзенхауэр генерал Францири, Бельгири, Голландири, Данири тата Норвегири хирĕç тăрса кĕрешнĕ организацисен ячĕпе приказ пани çинчен каланă. Приказра çапла каланă:

«Сирĕн ĕçĕрсем çинчен эпĕ яланах пĕлсе тăрса, эпĕ сирĕн кĕрешĕвĕре тăтăшах асăрхаса пытăм. Сирĕн халăхăра мĕн чухлĕ тĕрмене хупнине, асаплантарнине тата вĕлернине эпĕ пĕлетĕп. Сирĕн хĕçпăшал çителĕклĕ пулман пулин те, сире тискер те хĕрхенÿсĕр тăшман хупăрласа тăнă пулин те, эсир, ăнăçсăрлăхсемпе хăрушлăха пăхмасăрах, уйăхран уйăха, çулран çула кĕрешсе пытăр.

Çак çĕнтерÿ сехетĕнче эпĕ Верховный Главнокомандующи, сире—хирĕç тăрса кĕрешекен çарсене—дисциплинăшăн, паттăрлăхшăн тата союзниксен ĕçне питĕ пысăк усă папăшăн тав тăватăп».

ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИН ПАЛЛĂ ДЕЯТЕЛĔСЕНЕ ТЫТКĂНА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕсем гитлерла Германин паллă деятелĕсене тыткăна илнĕ. Вĕсем çаксем: империн хуçалăх министрĕ Функ, империн почта министрĕ—Омезорге тата империн канцелярийĕн начальникĕ Ламмерс.

ДЕ БРИНОНА АРЕСТЛЕНĔ

ПАРИЖ, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви çапла пĕлтерет: Германин Парижри оккупациллĕ влаçĕсем патĕнче Виши «правительствин» посолĕ пулса ĕçленĕ де Бринона Францин пĕрремĕш армийĕн зонинче арестленĕ те çийĕнчех тĕрмене хупнă.

ЯПОНИН ГЕРМАНИРИ ПОСОЛНЕ АРЕСТЛЕНĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: американецсен 7-мĕш армийĕ Японин Германири посолне Осимăна тата Японин дипломатипе консул служби 130 членне арестленĕ.

АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМ АМЕРИКĂРИ ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ЭКОНОМИКА ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Европăра çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ куп Америкăри нумай хаçатсем Пĕрлешÿллĕ Штатсенче çар хатĕрĕсем тăвассине чакарнă май çитес уйăхсенче экономикăра йывăрлăхсем пулма пултарни çинчен статьясем пичетлесе кăларнă. «П. М» хаçат çапла çырать. Европăра вăрçă пĕтни США экономикинче пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратма пултарать, тет. Хаçат çапла калать: Европăра вăрçă пĕтнĕ май промышленниксем хăйсен производствине государство контроллесе тăрассинчен хăтарма тăрăшаççĕ, вĕсем, яланхи йĕрке çине куçасшăн пулса, вăйлă хĕсеççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Германи парăнни США умне шалти ĕçсем тĕлĕшпе пысăк ыйту кăларса тăратать. Хăватлă ушкăнсем вăрçă вăхăтĕнчи хĕсĕкрех условисене пăрахăçа кăларма хушаççĕ. Çав ушкăнсене хирĕç тăмашкăн государствăна питĕ пĕлсе ертсе пыни кирлĕ.

Финанс тĕлĕшпе ĕçлекен ушкăнсен «Уолл стрит Джорнэл» хаçачĕ майăн 9-мĕшĕнче тÿрех çапла çырнă: Японипе вăрçма кирлĕ хатĕрсем тăвакан предприятисемсĕр пуçне, ытти предприятисене пурне те вăрçă вăхăтĕнчи хĕсĕк условисенчен хăтармалла, уйрăмăн илсе кăтартсан, хаксене кăтартса панă виçерен ÿстерме юраманнинчен тата ĕçукçине искусственнăй майпа чакармасăр тăрассинчен хăтармалла, тенĕ. Хаçат рабочисемпе служащисен ĕçукçине хальхи шайран чакармасăр тытса тăма тăрăшнине йăнăш та сиенлĕ ĕç тесе шутлать.

«Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Японие хирĕç пыракан вăрçă Европăри вăрçă пĕтнĕ пирки çар завочĕсенчен кăларса янă рабочисем ĕç тупиччченех пĕтсен, вăраха пырас ĕçсĕрлĕх хăрушлăхĕ вăйлăланĕ.

«Бизнес уик» хаçат çапла çырать: Вашингтонра шутланă тăрăх, Европăри вăрçă пĕтнипе Лăпкă океан çинчи вăрçă пĕтни хушшинчи тапхăр питĕ йывăр пулать. Çар заказĕсене кашни уйăхрах иккĕ виçĕ миллиард долларлăх пăрахăçа кăларса пырĕç. Ĕçукçи тĕлĕшпе вăрçăчченхи йĕрке çине куçĕç, ĕçукçи хальхинчен нумай каярах пулĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Минданао утравĕ çине Америка çарĕсен çĕнĕ пысăк вăйĕсем аннă, вара вĕсем 4 километр малалла кайнă. Борнео утравĕ патĕнчи Таракан утравĕ çинче Америка çарĕсем çав утравăн кăнтăрти пайĕнче малалла куçса пынă. Японии çарĕсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ.

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Кăнтăр-хĕвелтухăç Азири çарĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Бирмăра Ирравади секторĕнче Америка çарĕсем Проме патĕнчен кăнтăралла тапăнса пыраççĕ. Япони çарĕсем вĕсене хирĕç самаях вăйлă çапăçаççĕ. Япони çарĕсем Рангун хулипе Мандалай хули хушшинчи çултан хĕвелтухăçнелле чакаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 10-мĕшĕпе 11-мĕшĕнче американецсем японецсен 165 самолетне пĕтернĕ. Рюкю утравĕсен районĕнче американецсен пĕр пысăк карапне тата ытти темиçе судине сиенленĕ. Окинава утравĕ çинче Америка çарĕсем çав утравăн Маха ятлă тĕп хулипе пĕрлешсе ларнă ялсене çитсе кĕнĕ. Ытти секторсенче те Америка çарĕсем хăшпĕр çитĕнÿсем тунă.

Майăн 12-мĕшĕнче Америка çарĕсем Окинава утравĕнчен 55 миля хĕвеланăçнерехре выртакан Тори утравне йышăннă.

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи çарĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ. Австралин 6-мĕш дивизийĕн чаçĕсем Çĕнĕ Гвинея утравĕ çине Уэйвейк хулинчен хĕвелтухăçнерехре аннă. Ытти чаçсем сыран тăрăх Уэйвейк патнелле хĕвелтухăçнелле хăвăрт куçса пыраççĕ.

КЕСКЕН

▲ Сурçĕр Италире Виши «правительствин» фашистла милицийĕн руководительне Жозеф Дарнана арестленĕ.

▲ Америкăн 7-мĕш армийĕн чаçĕсем Германи генерал-полковникне Фалькенхорста тыткăна илнĕ. Фалькенхорст вăл Германин Норвегири хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ пулнă.

▲ Америка çарĕсем Австрире Риббентропăн советникне фон Шмидена ярса тытнă.

▲ Иракри нефть компанийĕ Киркукпа Хайфа хушшинче иккĕмĕш нефтепровод тума йышăннă. Çав нефтепровод 620 миля тăршшĕ пулать, вăл çулталăкра 4 миллион тонна чĕрĕ нефть юхтарса памалла.

▲ Киевран Белграда совет искусствин мастерĕсен пĕр ушкăнĕ пынă. Çав ушкăна çаксем кĕреççĕ: Совет Союзĕн халăх артисчĕсем Паторжинский, Литвиненко-Вольгемут, Шумский, Украина ССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕсем Лаптевпа Васильева тата ыттисем те. (ТАСС).

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви кĕçĕн çулхипе вăтам çулхи ачасем валли «Книжки—малышки» серипе виçĕ кĕнеке: 1) С. Шавлы — Киев пионерĕ, 2) Л. Н. Толстой — Пĕчĕк калавсем, 3) Кузьма Чулкась—Дядя Степа (вырăсла) кăларчĕ. Кĕнекесене кашнинех тĕрлĕ краскăсемпе пичетленĕ, ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ. Асăннă кĕнекесем çак кунсенчех сутăнма пуçлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сельэлектрăн Чăваш конторине васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: план отделĕн начальникĕ, экономист, главнăй бухгалтерăн заместителĕ, инженер-гидротехниксем тата техниксем.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 7, Сельэлектро.
3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—59, издательство конторин — 0—23.
НТ 00344
Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000